Р-32
27047-ЧУВ

# РЕВОЛЮЦИЧЧЕНХИ ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИ

I ТОМ

Чăваш
кĕнеке
издательстви

## Varuççi

Кĕркуннехи кунсенче
Çĕр вăрăмланса кайсассăн,
Мирун пичче пӳртĕнче
Улах ларнă мăн хĕрсем.
Хĕрлĕ хĕрсем хушшинче
Чи илемли — Варуççи,
Çут тĕнчере пĕр тĕнче...
    Пĕрре çулла варринче
Хĕрлĕ хĕрсем пухăнса
Мирун пӳрчĕ умĕнче
Çĕрĕпелен янăратса
Вăй кĕввисем калană,
Варуççине хурлана:
«Эй, Варуççи, Варуççи,
Эпир ĕлĕк юратсан,
Эсĕ пиртен кулаттăн;
Кĕвĕç пиртен, Варуççи,—
Ванюк сана юратать,

Ыталаса чуптăвать...»
Кĕрхи кунсем çитсессĕн,
Çур çĕр иртсе кайсассăн,
Вăрăм шывĕ хĕрринче,
Шап-шар уйăх çутинче
Çын мĕлки пек курăнать,
Тĕтре çинче палăрать.
Сиввĕн вĕрет сивĕ çил
(Унтан эсĕ сасă ил) —
Сивĕ çил вĕрнĕ майĕпе
Çав çын калать чĕлхипе:
«Атте-анне çуратрĕ,
Атте-анне чун пачĕ,
Чун пачĕ те ӳт пачĕ,
Анчах пăхма пĕлмерĕ.
Ӳсессине ӳсрĕм те,
Хĕрарăм сăнне илтĕм те,
Мана телей пулмарĕ:
Сар çулçă пек сарăхрăм,
Хĕн-хур курса хуралтăм.
Хĕнпе ӳссе хĕр пултăм,—
Вунçич çула тултартăм.
Килте хытă ĕçлеттĕм,
Ĕç айне ӳксе вилеттĕм,
Анчах атте-анне рен
Ăшă сăмах илтмерĕм.
Турă хушнă йĕркипе
Ваçук ачи юратрĕ,
Чăвашсенĕн йăлипе
Вăл хăтана çын ячĕ.
Атте, ыйтсан, памарĕ,
Анне мая каймарĕ;
Иккĕш пĕр канаш пулчĕçĕ,
Çапла каласа чарчĕçĕ:
«Ачапча хыççăн çӳресе,
Шыва кайса ан вилер;
Ачапчана ӳстерсе,
Çурта сиен ан кӳрер;
Çирĕм çула çиттĕр-ха,
Çурта усă кӳтĕр-ха,
Ваçукĕ те çук ĕнтĕ;
Ачин мĕскер пур ĕнтĕ?
Ваçук хăтан кил-çуртне
Ырă çын пырса кĕрес çук;
Эпир кайса кĕрсен те,

Унта йĕрки пулас çук».
Çапла канаш турĕçĕ,
Ачин ĕмĕтне татрĕçĕ;
Ют пулсассăн, пĕр ĕçчĕ,
Тăван ачине хур турĕç,
Хытă чĕрине юрарĕç,—
Ачин пурнăçне пĕтерчĕç.
Ашш[ĕ]-амăшĕ Ванюка
Урăх хĕре çураçрĕ,
Ирĕксĕрлесе çураçрĕ...
Хуйхă çирĕ Ванюка...
Халĕ кинне хĕнеççĕ...
Вилнĕ Ванюкшăн йĕреççĕ.
Эй, аттемçĕм, аннемçĕм,
Мана çуратнă пĕр чунçăм!
Сыв пулăр та пур пулăр,
Пуянлăхпа савăнăр,
Пурте ман пек ан пулăр,
Ачăра тек ан асăнăр.
Эсир мана курас çук,
Пуян çынна парас çук,
Унăн ĕçкине ĕçес çук,
Эпĕ те сире курас çук...
Ах, çанталăк, çут тĕнче,
Эсĕ хуралса килетĕн,—
Вăрăм шывĕ хĕрринче
Эсĕ, чунăм, пĕтетĕн...
Манăн чĕрем çунать-çке,
Вĕри çилпе пĕтет-çке...»
Тепĕр кунне, каç пулсан,
Шывран хĕр вилли кăларсан,
Қантур килнĕ, суд тунă,
Ялти çынсе[не] пуçтарнă,
Тĕплесе ыйтса хут çырнă,
Çавă ялтах çывăрнă...
1902